28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 МАЙ 27 ВЫРСАРНИКУН 101(6852) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма çуртйĕр ситтелĕклĕ хатĕрлер

Пирĕн чăваш халăхĕ хăйĕн историллĕ паллă кунне—Чăваш Автономийĕ 25 çул тултарнине çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илме хатĕрленет. Юбилей ячĕпе пуçланнă ăмăрту промышленноçра кăна мар, ялхуçалăхĕнче те вăйлăн сарăлса пырать.

Вăрмар районĕнчи «Красная Кубня» колхоз членĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе хăйсем мĕн тума шутлани çинчен республикăри хаçатсенче çырса пĕлтерчĕç. Выльăх ĕрчетмелли плана ăнăçлă тултарас тесен, выльăх апачĕ хатĕрлени кăна мар, выльăх-чĕрлĕхсем валли ситтелĕклĕ таран ăшă та çутă çуртсем хатĕрлени те кирлĕ, тесе çырчĕç вĕсем. Выльăхсем кĕтӳре çӳренĕ вăхăтра усă курса, «Красная Кубня» колхоз членĕсем июнĕн 20-мĕшĕ тĕлне ĕнесем валли профилактори, чирлĕ выльăхсене усрама изолятор тата пăруламалли вите тума, выльăх-чĕрлĕхсен кивĕ çуртйĕрĕсене юсаса пĕтерме пулаççĕ. Кунта выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсене юсама тытăннă та ĕнтĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе малта пыракан колхозсем выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсене май—июнь уйăхĕсенче юсаççĕ. Сĕнтĕр районĕнчи «Колос» колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур енĕпе те ытлашшипех тултарнă. Кунта выльăх-чĕрлĕхсем валли çуртйĕрсем тума та тытăннă. 40 пăру вырнаçмалăх вите тăваççĕ, сыснасен тата сурăхсен витине аслăлатаççĕ. Муркаш районĕнчи «Красное Сормово» колхозра ĕнесен тата пăрусен витине юсаççĕ.

Анчах та хăшпĕр колхозсен руководителĕсем выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсене юсассине кĕркуннехи ĕç тесе шутлаççĕ. Кĕркуннехи сивĕ кунсем пуçлансан, выльăхсене витене хупма вăхăт çитсен кăна çуртйĕрсене юсама тытăнаççĕ. Октябрьски районри Караньялĕнчи «Путь коммунизма» тата Мĕшĕлти «Туйташ» колхозсем пĕлтĕр ноябрь уйăхĕнче кăна выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсене юсаса пĕтерчĕç, çапах та ăшă тытмалла тăваймарĕç, мĕншĕн тесен кĕркуннехи сивĕ кунсем çитсе тăчĕç, авăн çапас, государствăна тырă парас ĕç хĕрӳллĕн пынă пирки ĕç вăйĕ те, стройматериалсем турттарма турттăм вăйĕ те çителĕксĕр пулчĕ.

Елчĕк районĕнчи Тимирязев ячĕпе тăракан колхозра выльăх çуртйĕрĕсене вăхăтра юсайман пирки выльăхсем сивĕ сĕрте тăнă, çавна пула выльăх апатне ытларах расходлама лекнĕ, çуркунне тĕлне апат сахалланса юлнă. выльăхсем вара ырханланса кайрĕç, лашасем вăйсăр пулчĕç, сураки вăрăма тăсăлчĕ. Ĕнесем тата ытти выльăхсем ырхан пулнă пирки чуптару кампанийĕ вăхăтра пуçланаймарĕ, хĕсĕр юлнă выльăхсен шучĕ нумай пулчĕ.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Агропом» колхозра ĕнесене усрама йĕркеллĕ витесем çук. Ĕнесем ырхан, сĕт сахал параççĕ, колхоз ĕнесенчен планпа пăхнă чухлĕ сĕт суса илеймест. Вăл кăна та мар, ĕнесем ырхан пирки вăхăтра чупаймаççĕ. Иртнĕ çул 28 ĕнерен 11 ĕне хĕсĕр юлнă.

Çак тĕслĕхсем вĕсем выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсене вăхăтра тата кирлĕ пек хатĕрлеменни. выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата унăн тухăçлăхне ӳстерес ĕçре мĕн тери пысăк сиен кӳни çинчен калаççĕ.

Ахальтен мар ĕнтĕ, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Государствăн колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатмалли 1945 çулхи планĕ çинчен» йышăннă постановленире кашни колхозпа совхозрах обществăллă выльăх-чĕрлĕх валли кирлĕ чухлĕ çуртйĕрсем хатĕрлеме кирлине, çав çуртйĕрсене выльăхсен йышĕ тата вĕсен тухăçлăхĕ малалла ӳсессине шута илсе тумаллине çирĕппĕн кăтартса пачĕç. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрсем ситтелĕклипе ситтелĕклĕ маррине кашни колхозрах тĕрĕслесе тухма, çав вăхăтрах вăл çуртйĕрсем мĕнлине тата вăл çуртйĕрсене аслăлатас, тивĕçлĕ йĕркепе кĕртес тĕлĕшпе колхозсемпе совхозсенче мĕнле ĕçсем тумаллине кăтартса акт çырма хушрĕç.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн постановленине пурнăçа кĕртес тесе, колхозсемпе совхозсен выльăхсене хĕл каçармалли çуртйĕрсене çуллахи вăхăтра, выльăхсем кĕтӳре çӳренĕ чухне, хатĕрлемелле, витесене тĕплĕн пăхса тухса, унта мĕн тумаллине палăртмалла тата халех ĕçе тытăнмалла.

Выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсене çĕнĕрен тума, киввисене юсама ятарласа бригадăсем тумалла. Вăл бригадăсен шутне колхозри чи лайăх платниксене, выльăх-чĕрлĕх ĕçĕнче ĕçлекенсене тата ытти колхозниксене кĕртмелле.

Уйрăм колхозсенче выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсене тăвасси строительство материалĕсем (йывăç, хăма т. ыт. те) вырăнта çук пирки чарăнса тăрать. Выльăх çуртйĕрĕсем тума кирлĕ пулакан йывăçа касса хатĕрлеме уйрăм çынсем уйăрса ямалла, вăрмантан йывăç турттарас ĕçре лашасемпе кăна мар, кӳлсе ĕçлеме вĕрентнĕ вăкăрсемпе те анлăн усă курмалла. Вăкăрпа йывăр ĕç тума çук тенине хăшпĕр колхозсенче халĕ те илтме пулать-ха. Анчах та нумай колхозсем вăкăрсемпе анлăн усă курма май пуррине лайăх çирĕплетсе параççĕ. Вăрмар районĕнчи «Аниш» колхозра (председателĕ Григорьев юлташ) кăçал çуракинче кăна колхозăн 30 ĕни-вăкăрĕпе тата колхозниксен 20 ĕнипе ĕçлепĕ. Вĕсем çак ĕнесемпе йывăç тата ытти япаласем турттарас ĕçре те анлăн усă кураççĕ.

Пирĕн республикăри чылай колхозсем выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсене йывăçран кăна мар, тăмран та тăваççĕ. Вăрмар районĕнчи «Красная Кубня» колхозра выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсене пĕтĕмпе тенĕ пекех тăмпа улăмран тунă.

Выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсене тăвасси тата юсасси—паян тумалли ĕç. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă тăрăх, выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсене çĕнĕрен туса, киввисене юсаса тата ăшă каймалла мар туса çитерессине октябрь уйăхĕччен вĕçлемелле. Çак срок аякра-ха, тесе лăпланса ларни пачах тĕрĕс мар. Тырпулсене пухса кĕртес ĕç пуçлансан, колхозри пĕтĕм вăя çав ĕçе мобилизацилеме тивет. Çавăнпа та май тата июнь уйăхĕсем выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсене туса тата юсаса пĕтермелли уйăхсем пулса тăраççĕ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ: советпа парти тата çĕрĕç органĕсен 1945 çулхи тĕп задачи—колхозсемпе совхозсенчи выльăх-чĕрлĕхсен йышне малалла ӳстересси, выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне пур енчен те хăпартасси пулса тăрать, тесе палăртрĕç. Çак задачăна пурнăça кĕртес ĕçре выльăх-чĕрлĕх çуртйĕрĕсене лайăх хатĕрлени пысăк вырăн йышăнать. Çавăнпа та халĕ çак ĕç — партипе совет тата çĕрĕç органĕсен, колхозниксемпе колхозницăсен чи пысăк тивĕçĕ пулса тăрать.



Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе ВКП(б) Обкомĕн ялхуçалăх пайĕ тăратнă тăрăх, малта пыракан çак МТС-сене республикăри ХИСЕП ХĂМИ çине кĕртнĕ:

8. **Канаш МТС-ĕ** (директорĕ **Зайцев** юлташ, пуçламĕш парторганизаци секретарĕ **Айдарова** юлташ, старши механик Афанасьев юлташ). МТС çуркунне тракторпа тумалли ĕçсен планне 102,6 процент тултарнă, 1168 килограмм горючи перекетленĕ.

Çуракинче уйрăмăнах çаксем палăрнă: 11-мĕш бригада (бригадирĕ **Андреев** юлташ) плана 220 процент тултарнă; 1-мĕш бригада (бригадирĕ **Гаврилов** юлташ) плана 156 процент тултарнă; 7-мĕш бригада (бригадирĕ **Архипов** юлташ) плана 125 процент тултарнă; 3-мĕш бригада (бригадирĕ **Данилов** юлташ) плана 121 процент тултарнă. Трактористсем: **Трофимов, Амусов, Куракова** тата **Матвеев** юлташсем хăйсен заданийĕсене 153 процентран пуçласа 183 процент таран тултарнă.

9. **Ишлей МТС-ĕ** (директорĕ **Рязанов** юлташ, пуçламĕш парторганизаци секретарĕ **Патров** юлташ, старши механик **Кириллов** юлташ). МТС çуркунне тракторпа тумалли ĕçсен планне 119 процент тултарнă.

Çуракинче уйрăмăнах çаксем палăрнă: 12-мĕш бригада (бригадирĕ **Ванеев** юлташ) плана 124 процент тултарнă, 9-мĕш бригада (бригадирĕ **Ефимов** юлташ) плана 155 процент тултарнă, 11-мĕш бригада (бригадирĕ **Иванов** юлташ) плана 154 процент тултарнă, 2-мĕш бригада (бригадирĕ **Васильев** юлташ) плана 128 процент тултарнă, 5-мĕш бригада (бригадирĕ **Фомин** юлташ) плана 122 процент тултарнă тата 13-мĕш бригада (бригадирĕ **Мазяев** юлташ) плана 143 процент тултарнă.

Колхозниксем саванса ĕçлеççĕ

Мухтавлă Хĕрлĕ Çар гитлерла Германие аркатса тăкнипе хавхаланса, районри колхозниксемпе колхозницăсем уйхирсенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Районри колхозсем майăн 16-мĕшĕ тĕлнех пĕрчĕллĕ тырăсемпе пăрса йышши культурăсене акса пĕтерчĕç.

Çуртырисем акас ĕçе уйрăмăнах «Красная Армия» колхоз (председателĕ Яковлев юлташ), Каганович ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Коняшкин юлташ), «Красная Чувашия» колхоз (председателĕ Никитина юлташ), Доронин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Филиппов юлташ), Жуков ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Мухин юлташ) тата ытти нумай колхозсем ăнăçлăн тата пысăк пахалăхпа вĕçлерĕç. Çак колхозсем çуртыррисене 8 ĕç кунĕнче акса пĕтерчĕç. Асăннă колхозсенче сеялкăсемпе туллин усă курнине уйрăмăнах палăртмалла. Жуков ячĕпе тăракан колхозра 169 гектар тĕштырăсемпе пăрса йышши культурăсем акнă, вăл шутран 148 гектарне, Доронин ячĕпе тăракан колхозра 296 гектартан 232 гектарне сеялкăсемпе акнă.

Асăннă колхозсенче тата «Красное пламя», «Красная звезда», «Мотор» ялхуçалăх артелĕсенче çураки ĕçĕнче майракаллă шултăра выльăхсемпе анлăн усă кураççĕ. «Красное пламя» колхозра çураки ĕçĕнче 20 ĕне-вăкăрпа, «Красная звезда» колхозра 15 ĕне-вăкăрпа ĕçлеççĕ. Малта пыракан колхозсем çуракинче юлса пыракан колхозсене пулăшаççĕ. «Гвардеец» колхоз кая юлса пынине пĕлсенех, «Канаш» ялхуçалăх артелĕнчи колхозниксем пĕр кун хушшинче 32 лашапа пырса 16 гектар сухаласа акса пачĕç. Асăннă «Гвардеец» колхоза «Красное пламя» ялхуçалăх артелĕ те 10 лашапа ĕçлесе пулăшрĕ.

Колхозниксем вăйлă тырпул туса илес тесе пĕтĕм вăйпа тăрăшса ĕçлеççĕ. «Красная Армия» ялхуçалăх артелĕнчи çамрăк колхозник Иванов Николай вăкăрсемпе сӳреленĕ çĕрте ĕçлет. Вăл кулленхи нормăна 105 процент тултарса пыратчĕ. Майăн 9-мĕшĕнче гитлерла Германие тĕппипех çапса аркатнă ятпа колхозра митинг пулса иртрĕ. Çав митинг хыççăн Иванов юлташ хăй ĕçлекен вăкăрсемпе кулленхи нормăна кашни кунах 140 процентран кая мар тултарса пыма пуçларĕ. Унпа пĕр тантăш Иевлев Николай та ака ĕçĕнче нормăна 120—125 процент тултарса пычĕ.

Районри пур колхозсенче те халĕ орденлă Чăваш республики 25 çул тултарнине пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илессишĕн социализмлă ăмăрту сарăлса кайрĕ.

Колхозниксемпе колхозницăсем çураки ĕçĕсене пĕтĕмĕшпех вĕçлесе çитерессишĕн кĕрешеççĕ.

Çураки ĕçĕнче колхозсене кăçалхи çул МТС пысăк пулăшу пачĕ. Майăн 18-мĕшĕ тĕлне МТС-ри тракторсен 12 бригадинчен 8-шĕ çураки планне ытлашшипех тултарчĕç. Пĕтĕмĕшпе илсен, МТС çураки планне майăн 18-мĕшĕ тĕлнех пурнăçларĕ. Тракторсемпе 2820 гектар сухаламалла пулнă пулсан, 2825 гектар сухаланă. Трактористсенчен уйрăмăнах коммунистсемпе комсомолецсем малти ретре пыраççĕ. Тракторсен 11-мĕш бригадине ВКП(б) членĕ П. Андреев юлташ ертсе пырать. Вăл ертсе пыракан бригада çураки планне паянхи кун тĕлне 220 процент тултарчĕ. ВКП(б) членĕн кандидачĕ О. Куракова юлташ ертсе пыракан бригада çураки планне 130 процент пурнăçласа, 100 килограма яхăн горючи перекетлесе хăварчĕ. Коммунистка Ольга Куракова çураки вăхăтĕнче 99 гектар сухаласа, плана 201 процент пурнăçларĕ, 67 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕ.

Кейшев комсомолец ертсе пыракан комсомолецсемпе çамрăксен бригади те çураки планне 130 процент ытла тултарчĕ.

МТС-ри пуçламĕш парторганизаци (секретарĕ Н. Айдарова юлташ) трактористсем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе аван организациленĕ. Бригадăсенче тата МТС-ра социализмлă ăмăрту мĕнле пынине çырса хума хăма организациленĕ. Вăл хăма çине кашни кунах трактористсем мĕнле ĕçленине çырса пыраççĕ. Бригадăсенче стена хаçачĕсемпе боевой листоксем вăхăтра тухса тăраççĕ.

Районри колхозсенче халĕ çĕрулмипе пахча-çимĕçсем лартас енĕпе хĕрӳ ĕç пырать.

И. ШАРКОВ.
ВКП(б) Канаш райкомĕн секретарĕ.

СССР Халăх Комиссарĕсен Советĕнчен тата ВКП(б) Центральный Комитетĕнчен

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ тата ВКП(б) Центральный Комитечĕ вырăссен талантлă поэчĕ-баснописецĕ ДЕМЬЯН БЕДНЫЙ (Ефим Алексеевич Придворов) вилни çинчен хурланса пĕлтереççĕ. Демьян Беднийăн çивĕч сăмахĕ социализмлă революци ĕçне чыслăн пулăшса пынă.

СССР ХАЛĂХ КОМИССАРĔСЕН СОВЕЧĔ. ВКП(б) ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧĔ.

Демьян Бедный

Вырăссен питĕ чаплă поэчĕ **Демьян Бедный** (Ефим Алексеевич Придворов) вилчĕ.

Демьян Бедный 1883 çулта хресчен çемьинче çуралнă. Поэт-революционерăн çулăмлă сăмахĕпе вăл ĕçхалăхне 35 çул хушши ытла тӳрĕ кăмăлпа пулăшса пурăнчĕ.

Литература тĕлĕшпе ĕçлеме пуçланăранпах Демьян Бедный хăйĕн пултарулăхне большевиксен пичечĕн ĕçĕпе çыхăнтарнă. 1910-мĕш çултан пуçласах «Звезда» тата «Правда» хаçатсенче пичетленнĕ сăввисемпе баснисенче тата фельетонĕсенче унăн питĕ пысăк та ялтăртатса тăракан таланчĕ—поэт-трибунăн, рабочи класăн çулăмлă агитаторĕн, çивĕч те витĕмлĕ сатирикăн, ĕççыннисен ĕçĕшĕн пĕр ывăнмасăр кĕрешнĕ çыннăн таланчĕ анлăн палăрчĕ.

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци хыççăн Демьян Беднийăн пултарулăхĕ анлăн сарăлса кайрĕ. Унăн юррисем, сăввисем, баснисем, поэмисем, плакатсем айне çырнă сăввисем халăха çав тери паллă пулса тăчĕç, халăх вĕсене питĕ юратса вулама пуçларĕ. Граждăн вăрçи вăхăтĕнче Демьян Бедный Хĕрлĕ Çарта ĕçлерĕ. Унта вăл агитаципе çутта кăларас ĕçе калама çук хастарлăн туса пычĕ, Хĕрлĕ Çарăн боецĕсене интервентсемпе белогвардеецсене хирĕç çапăçма хавхалантарчĕ.

Вырăссен граждăнла поэзийĕн чи лайăх енĕсене пурнăça кĕртсе пыракан пулса, уçăмлă та тĕрĕс сăввăн мастерĕ пулса, халăх чĕлхипе питĕ лайăх пĕлекен çын пулса, Демьян Бедный чи паллă совет поэчĕсенчен пĕри пулса тăчĕ. Темиçе миллион совет çынни унăн сăввисене пĕлеççĕ, юратаççĕ, унăн юррисене юрлаççĕ.

Хамăр çĕршыва социализмла улăштарса пынă вăхăтра Демьян Беднийăн чи лайăх произведенийĕсем çынсене хастарлăн ĕçлеме çав тери хĕрӳллĕн чĕнсе тăчĕç.

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче Демьян Беднийăн «Правда» хаçатра тата центрта тухакан ытти хаçатсенче пичетленнĕ боевой сăввисем çынсене хавхалантарса, паттăр ĕçсем тума чĕнсе тăчĕç. Унăн плакатсем айне çырнă сăввисем патриотла туйăмпа, тăшмана кураймасăр, хамăрăн халăх çĕнтерессине, пирĕн ĕç тĕрĕссине çирĕп шанса çырнă сăвăсем пулса тăраççĕ.

«Эпир тăшмана çĕнтеретпĕр. Эпĕ хамăн халăха
Пин çулхи иксĕлми шанчăкпа шанатăп»,

тесе çырнă вăл 1941 çулхи йывăр кунсенче.

Демьян Бедный хăйĕн пурнăçĕнче питĕ лайăх произведенисем нумай çырнă. Совет Правительстви, поэтăн халăхшăн тунă паха ĕçĕсене пысăк вырăна хурса, ăна Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе тата Ленин орденĕпе наградăланă.

Демьян Беднийăн сăввисемпе поэмисем тата юррисем халăх хушшинче нумайччен пурăнĕç. Чаплă поэта-революционера эпир ĕмĕр асра тытăпăр.

Н. Асеев, П. Антокольский, М. Алигер, А. Безыменский, В. Бахметьев, П. Бажов, С. Васильев, В. Вишневский, В. Вересаев, С. Вургун, Б. Горбатов, М. Голодный, П. Головенченко, Ф. Гладков, Е. Долматовский, А. Жаров, Н. Зарьян, А. Игнатьев, В. Инбер, Вс. Иванов, М. Исаковский, Л. Ильичев, А. Караваева, С. Кирсанов, В. Кожевников, В. Катаев, Б. Кербабаев, В. Лебедев-Кумач, Л. Леонов, А. Лейтес, Ю. Либединский, Ю. Лукин, В. Луговской, С. Маршак, С. Михалков, С. Муканов, Л. Никулин, П. Поспелов, Д. Поликарпов, А. Прокофьев, Н. Погодин, М. Пришвин, Б. Пастернак, М. Рыльский, К. Симонов, И. Сельвинский, В. Саянов, Л. Соболев, А. Серафимович, А. Сурков, Н. Тихонов, А. Твардовский, А. Токомбаев, А. Фадеев, К. Федин, О. Форш, Г. Хесин, С. Чиковани, П. Чайкин, М. Шолохов, С. Щипачев, И. Эренбург.

ТЫРĂ ВЫРАКАН МАШИНĂСЕМПЕ ĔÇ ЛЕКЕНСЕН ÇĔНĔ ОТРЯЧĔ

Кăçал тырă вырса пуçтарма квалификациллĕ комбайнерсен çĕнĕ отрячĕ — 30.000 çын тухса каять. Вĕсем пурте ĕлĕк трактористсем е комбайнерсен помощникĕсем пулнă, ялхуçалăх механизацийĕн шкулĕсенче 4 уйăх хушши вĕреннĕ. Вĕсенчен 23.000 çынна яхăн вĕренсе тухнă ĕнтĕ е вĕренсе тухаççĕ. Нумай комбайнерсем халь хăйсен комбайнĕсене юсаççĕ.

Комбайнерсен помощникĕсене машинно-тракторнăй станцисенчи курссенче вĕрентсе хатĕрлеççĕ, çав курссенче халь 6.500 колхозник вĕренет.

Тырпула пухса кĕртме тата шоферсем те хатĕрлеççĕ. Çу вĕçленнĕ тĕле ялхуçалăх механизацийĕн шкулĕсем 7.500 шофер вĕрентсе кăлараççĕ. (ТАСС).

КОЛХОЗСЕНЧЕ АРМАНСЕМ ТĂВАÇÇĔ

Çĕнĕ тырра вырса илме хатĕрленнĕ май колхозсем армансене те йĕркене кĕртеççĕ. Ишĕлнĕ армансене юсаççĕ тата çĕнĕ армансем тăваççĕ. Вăрçăччен пирĕн çĕршыври колхозсенче 100.000 ытла шыв арманĕпе çил арманĕ пулнă. Вăрçă вăхăтĕнче нимĕç оккупанчĕсем вăхăтлăха тытса илнĕ районсенче колхозсенчи армансен 60 процентне яхăн ишĕлтернĕ.

Колхозниксем 1944 çултах 23.000 армана ытла юсаса хута янă тата çĕнĕрен тунă. Кăçал 5.500 армана хута яма, 16.000 армана тĕплĕн юсама тата 2.000 çĕнĕ арман туса лартма палăртнă.

Çак ĕçе тума колхозсене вырăнти вăрмансенче строительство материалĕсем хатĕрлеме ирĕк панă. Наркомлеса, вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕн предприятийĕсене армансем валли кирлĕ япаласем туса пама хушнă.

СССР Наркомземĕ Сельэлектро ятлă организацие армансене юсас тата çĕнĕрен тăвас ĕçре колхозсене техникăллă пулăшу пама хушнă.

Районри колхоз шкулĕсенче мельниксем тата çăнăх авăртас ĕçĕн инструкторĕсем хатĕрлеме пуçлаççĕ. (ТАСС).

Шкулсенчи экзаменсем

Вĕренекенсем ыйту çине тĕплĕн ответлеççĕ

Шупашкарти арçын ачасен 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулĕнче IV-мĕш, VII-мĕш тата X-мĕш классенче вĕренекенсем экзаменсене лайăх паллăсемпе параççĕ. X-мĕш класра вырăс чĕлхипе тата литературипе экзаменсем пулса иртрĕç. Ку предметсемпе «виççĕ» паллăран кая илнĕ ачасем пулман. К. Рыжов комсомолец пур предметсемпе те «пиллĕк» паллă илсе пырать.

IX-мĕш класра виçĕ предметпа пĕлӳ тĕрĕслевĕсем пулса иртрĕç. Ачасем пĕлӳ тĕрĕслевĕсене лайăх хатĕрленни, вĕреннĕ материалсене çирĕп пĕлни курăнать. 15 вĕренекенрен историпе 10 ача «пиллĕк», ыттисем «тăваттă», пĕр ача çеç «виççĕ» паллă илнĕ. Вĕренекенсем ыйтусем çине тĕплĕн ответлеççĕ, историри ĕçсене йĕркеллĕ каласа пама, кирлĕ чухне хальхи вăхăтпа çыхăнтарма пĕлеççĕ. Алгебрăпа геометри предмечĕсем тăрăх та пĕлӳ тĕрĕслевĕсем лайăх иртрĕç. Алгебрăпа çыру ĕçĕсем тăрăх 7 вĕренекен «пиллĕк» паллă илнĕ. Геометрипе начар паллă илекенсем пĕрре те пулман.

VII-мĕш «Б» класра 22 ача экзамен параççĕ. Малтанхи экзаменра алгебрăпа арифметика тăрăх çыру ĕçĕсем пулчĕç. Çак предметпа 13 ача «пиллĕк» тата «тăваттă» паллăсем илчĕç, икĕ ача начар паллăсем илсе экзамен параймарĕç.

Экзамен нумай ачасем шкулта тăрăшса вĕреннине, çирĕп пĕлӳ илнине кăтартса парать. Пĕлӳ тĕрĕслевĕсенче пур вĕренекенсем те хăйсене йĕркеллĕ тытаççĕ.

Н. МИНИН.

Вырăс чĕлхине çителĕксĕр пĕлеççĕ

ЭЛĔК, майăн 27-мĕшĕ. (Телефонпа). Мăн Вылăри вăтам шкулта 10-мĕш класра 17 ача вĕренет. Вĕсенчен экзамен тытма 12 вĕренекене кĕртнĕ. Вырăс чĕлхипе сочиненисем çырни шкулта ку предмета мĕнле вĕрентнине тата ачасем мĕнле ăнланнине лайăх кăтартса пачĕ. 13 вĕренекенрен 7 ача сочиненисем тăрăх начар паллăсем илчĕç. Вĕсене малашнехи экзаменсене кĕртмелле мар тунă. Халĕ çак класран пурĕ те 6 вĕренекен кăна экзаменсем параççĕ. Вырăс чĕлхипе сăмах вĕççĕн ыйтни те ачасем ку предмета çителĕксĕр пĕлнине кăтартса пачĕ. Ачасем вырăсла питех те начар калаçаççĕ, сăмахсене сыхăнтарса хăйсен шухăшĕсене вырăсла тĕплĕн каласа пама пултараймаççĕ. Ку шкулта вырăс чĕлхине вĕрентнĕ Ершов юлташ хăйĕн ĕçĕ çине çиелтен пăхнă, ачасене çирĕп пĕлӳ парассишĕн тăрăшса вĕрентмен.

(Хамăр корр.).

Унăн превосходительствине Иден господина
Великобританин Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрне

ЛОНДОН

Англипе Совет Союзĕ пĕр-пĕринпе Союзлă договор тунă виçĕ çул тултарнă кун Сире тата Великобритани Правительствине Совет Правительстви ячĕпе тата хамран туслă салам яратăп тата чун-чĕререн ырă сунатăп.

Пирĕн халăхсем вăрçă тĕлĕшпе пĕрле килĕштерсе ăнăçлăн ĕçлени, гитлерла Германие историллĕ çĕнтернипе вĕçленнĕскер, çав Договор кирлине тата унăн вăйне кăтартса пачĕ.

Великобританипе Совет Союзĕ хушшинчи туслă çыхăнусем пирĕн çĕршывсенчи халăхсен тата çирĕп мирпе хăрушсăрлăх туса хума тăрăшакан ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсен ырлăхĕшĕн малалла çирĕпленсе пырассине эпĕ шанса тăратăп.

В. МОЛОТОВ.

1945 çулхи майăн 26-мĕшĕ.

Унăн превосходительствине Молотов господина
Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарне

МУСКАВ

Англипе Совет Союзĕ пĕр-пĕринпе союзлă пуласси çинчен тунă Договор çав союзăн пĕррĕмĕш тĕллевне—гитлерла Германие парăнтарассине—çĕнтерӳллĕн пурнăçа кĕртнĕ вăхăтра виçĕ çул тултарчĕ. Халĕ эпир вăрçă хыççăнхи тапхăрта пурăнатпăр. Çав тапхăрта эпир, хамăрăн Договорпа килĕштерсе, Пĕрлешнĕ ытти нацисен интересĕсене шута илсе, хамăр валли ют çĕршывсен çĕрĕсене илме тăрăшмасăр тата ытти государствăсен шалти ĕçĕсене хутшăнмасăр, пĕр-пĕринпе тачăн та туслăн çыхăнса ĕçлеме килĕшрĕмĕр. Эпĕ, малашнехи пекех, çакна палăртатăп: пирĕн икĕ çĕршыв Англипе Совет Союзĕ хушшинчи союз майлă, çавăн пекех тата ун хыççăн пирĕн икĕ çĕршыв хушшăннипе тунă килĕшӳсем майлă ĕçлесе тăрсан, пĕтĕм Европа вăраха пыракан мир туянма тата чечекленсе ӳссе пыма пултарĕ.

Эпĕ Сире тата Сирĕн урлă СССР Правительствипе халăхĕсене салам яратăп. Унăн Величествин Правительствипе тата Великобритани халăхĕпе пĕрле вĕсене ырă сунатăп.

Антони ИДЕН.

Пĕр сăлтавсăрах тăсса пыраççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ, майăн 26-мĕшĕ. (Телефонпа, хамăр корр.). Колхозсем ферма çумĕнчи участоксене акма тытăнчĕç. Водопьянов ячĕпе тăракан колхоз ферма çумĕнчи участока 2 гектар тымар-çимĕç акнă. Çавăн пекех «Единство» колхоз 2 гектар, «Красная Чувашия» колхоз 6 гектар, «Комбайн» колхоз 3 гектар тымар-çимĕç акнă. Кармалти «Звезда» колхоз 4 гектар çине пĕр çул ӳсекен курăк акнă.

Анчах та, районĕпе илсен, ферма çумĕнчи участоксене акасси калама çук çителĕксĕр пырать. Паянхи кун тĕлне 340 гектар акас вырăнне пурĕ те 48 гектар кăна акнă. «Ударник», «Социализм», «Коминтерн», «Дружба», Партин 17-мĕш съезчĕ тата Буденный ячĕпе тăракан колхозсем, çуртыррисене акса пĕтернĕ пулсан та, ферма çумĕнчи участоксене акма тытăнман. Кунта çак ĕçе пĕр сăлтавсăрах тăсса пыраççĕ.

Н. АНДРЕЕВ.

Тырпул пухса кĕме хатĕрленеççĕ

ÇĔРПӲ. Тивĕш ял Советĕнчи «Красные Тиуши» колхоз çуракине вĕçленĕ хыççăнах тырпул пухса кĕме хатĕрлеме тытăнчĕ. Колхоз тырă вырмалли машинăсене юсама пуçларĕ. 36 михĕ, 6 шăналăк хатĕрленĕ, 7 урапа юсанă. Колхоз кăçал тырăсене кĕрепленлĕ çавасемпе çулма хатĕрленет.

— Тырпула кĕске вăхăтра пухса кĕртни тырпула тăккаласси́нчен хăтарать. Çавăнпа та эпир тырпула пухса кĕртме тĕплĕн хатĕрленсе тухас тетпĕр, пĕр тăккаламасăр пухса кĕртме шутлатпăр,—тет колхоз председателĕ Михайлов юлташ.

Колхозниксем кăçал пысăк тимлĕхпе ĕçлеççĕ. Стахановецсен йышĕ ӳссех пырать. Бригадирсем ĕçкунĕсене ĕçкĕнекисем çине вăхăтра çырса параççĕ.

А. ИВАНОВ.

ÇАМРĂКСЕМ ĔÇРЕ

Йĕпреç районĕнчи «Победа» колхозра 13 çулти Василий Ивановпа Ананий Сумкин плугпа сухаланă çĕрте кулленхи ĕç нормине 120—130 процент тултараççĕ. Вĕсем ирхине ирех тухса, тĕттĕм пулсан тин ĕçрен таврăнаççĕ. Колхоз правленийĕ Ивановпа Сумкин çамрăксене ялан нормăна ытлашшипех тултарнăшăн премипе шучĕпе пыл пачĕ.

П. КУРАКОВ.

Российăри рабочи депутачĕсен пĕрремĕш Совечĕ

Хĕрĕх çул ĕлĕкрех, 1905 çулхи майăн 15/28/-мĕшĕнче вырăссен пир-авăр промышленноçĕн пысăк центрĕсенчен пĕринче—Иваново-Вознесенск хулинче—рабочи депутачĕсен пĕрремĕш Советне туса хунă.

Российăра стачкăсен юхăмĕ 19-мĕш ĕмĕр вĕçĕнчех сарăлса пыма тытăннă. 1885 çулта çĕршывăн вăтаçĕрти промышленность районĕнче рабочисен малтанхи пысăк стачкисем пулса иртнĕ. Ун чухне Мускаври стачка çинчен пĕтĕм Российăна хыпар сарăлнă. 1896 çулта Петербургра Ленин ертсе пыракан «Союз борьбы за освобождение рабочего класса» ятлă организаци стачкăсем организациленĕ, вĕсене 30 пин çын ытла хутшăннă. Рабочи класăн кĕрешĕвĕ вăйлăн сарăлса кайнă. Правительствăн рабочисем ыйтнипе чылай чухне ирĕксĕрех килĕшмелле пулнă. Батумри тата Бакури Сталин юлташ ертсе пынипе пулса иртнĕ стачкăсем ирĕклĕхшĕн пыракан кĕрешĕвĕн историне унăн чаплă страницисем пулса кĕрсе юлнă.

1905 çулхи январь уйăхĕнчи асран каймн кунсем, «Юнлă вырсарникунра» Россия империйĕн столицинче кĕрленĕ тупă сассисем, пĕтĕм Российăна янраса кайса, Иваново-Вознесенскри рабочисем патне çитнĕ. Иваново-Вознесенск вăл вăхăт тĕлне 30 çул хушши стачкăсем туса кĕрешнĕ ĕнтĕ. Питер хулинчи рабочисен юнне юхтарни çинчен пĕлсен, Иваново-Вознесенск хĕрӳллĕн хумханма тытăннă. Большевиксен партийĕн организацийĕ рабочисене забастовка тума хатĕрленĕ, çĕршывра пулса иртекен ĕçсен политикăллă пĕлтерĕшне ăнлантарса панă. Политика енĕпе правасăр пулнă тата калама çук йывăр эксплоатацие пула ывăнса çитнĕ Иваново-Вознесенск пролетариачĕ кĕрешĕве тухма вăйсем пухнă. Майăн 1-мĕшĕнче вăрманта рабочисен йышлă пухăвĕ пухăннă, унта: «Тĕп пултăр самодержави! Сывă пултăр Российăри революци!» текен лозунгсем кăларса тăратнă.

Майăн 9-мĕшĕнче заводсемпе фабрикăсен представителĕсемпе пĕрле вăрманта пухăннă большевиксен конференцийĕ майăн 12-мĕшĕнче забастовка пуçлама йышăннă. Çак конференци, ун хыççăн сарăлса кайнă стачкăсем пекех, пирĕн партин чаплă деятелĕ Михаил Васильевич Фрунзе ертсе пынипе иртнĕ.

Çак конференцире Иваново-Вознесенск рабочийĕсен требованийĕсене хатĕрлесе пĕр кăмăлпа çирĕплетнĕ. Вăл требованисем 30 пунктран тăнă. Унта 8 сехетлĕ ĕçкунĕ тăвасси çинчен калакан лозунг пулнă, обязательнăй йĕркепе пурне те пĕр тӳлевсĕр пуçламĕш вĕренӳ парасси çинчен калакан, пĕтĕм халăх пĕртан правăпа тата вăрттăн сасăласа тӳрех суйлапă Учредительнăй пухăва пухасси çинчен калакан тата ытти требованисем пулнă.

Майăн 12-мĕшĕнче ирхине забастовка тăвакан рабочисен нумай йышлă ушкăнĕсем хулари пысăк площаде пухăнма тытăннă, унта партире тăракан тата партире мар ораторсем туха-туха каланă. Çакăн çинчен пĕлсе, Владимир хулинчен Леонтьев губернатор пырса çитнĕ те çарсемпе жандармерие пухма тытăннă. Забастовка тăвакансен пухăвĕсем хулари площадьре малашне те пулса пынă. Анчах губернатор, хĕçпăшалпа хăратса, стачка тăвакансене хăйсен пухăвĕсене вăрман хĕррине, Талка юханшывĕ патне куçарттарнă. Стачкăн тăваттăмĕш кунĕнче, майăн 15-мĕшĕнче, историллĕ ĕç пулса иртнĕ. Ушкăнсене пайланса, стачка тăвакансем стачкăна ертсе пыма тата администрацие калаçма 150 депутат суйласа лартнă. Забастовка тăвакан рабочисен революциллĕ пуçарулăхне пула тунă çак çĕнĕ, унччен нихăçан пулман организаципе тĕрлĕ ят панă. «Депутатсен пухăвĕ», «Уполномоченнăйсен Совечĕ», «Рабочи депутачĕсен Совечĕ», тенĕ.

Совет забастовкăсен хумĕ вăйланнă вăхăтра пулса тăнă. Вăл Иваново-Вознесенск рабочийĕсен массăллă-политикăллă организацийĕ, революциллĕ влаçăн пуçламăшĕ, большевиксен социал-демократиллĕ организацийĕ ертсе пыракан орган пулнă. Советăн пленумĕ стачка туса кĕрешмелли практикăллă ыйтусене, 8 сехетлĕ ĕçкунĕ пирки тăракан ыйтăва сӳтсе-явнă, парти организацийĕпе пĕрле, рабочисен пĕрлешӳллĕ пухăвĕн кун йĕркисене палăртнă. Совет хăй пуçланса кайнă хыççăн малтанхи кунсенчех эрех лавкисемпе эрех сутакан ытти заведенисене хуптарнă. Иваново-Вознесенскра çирĕп йĕрке туса хунă, ун пек йĕрке унччен нихăçан та пулман.

Рабочисен масси политика енĕпе питех те сахал вĕреннĕ пулнă-ха. Ĕççыннисен калама çук йывăр пурнăçне мирлĕ майсемпех улăштарса лайăхлатма пулать тесе, вĕсем çирĕп шанса тăнă. Çавăнпа та большевиксем тата Советăн президиумĕ Иваново-Вознесенскри рабочисене политика енĕпе вĕрентес, забастовка тăвакансен пĕрлешӳллĕ пухăвĕсене рабочисен политикăллă университечĕсем туса хурас тесе, пĕтĕм вăя хурса ĕçленĕ.

Çав вăхăтрах Иваново-Вознесенскри фабрикăсен хуçисем рабочисем ыйтнисемпе ниепле те килĕшмен, забастовка тăвакансен çемьисем выçă ларнă. Пурнăç питĕ йывăрланса çитнĕ. Майăн 22-мĕшĕнче депутатсен пухăвĕнче рабочисем çитес кунра фабрика хуçисенчен ответ илмешкĕн площаде кайма йышăннă. Анчах та полиципе казаксем демонстраци тăвакансене хăваласа янă, пуху тума паман. Талка шывĕ патне каллла тавăрăнса, рабочисем пуху иртнернĕ. Çакăнта вара чи малтанхи хут: «Тĕп пултăр ылханлă самодержави», тесе кăшкăрнисем уйрăмăнах вăйлăн илтĕннĕ.

Июнĕн 3-мĕшĕнче, губернатор забастовка тумашкăн чарăнма хушса асăрхаттарнă пулин те, рабочисем, яланхи пекех, Талка шывĕ патĕнче забастовкăна малалла тăсасси çинчен сӳтсе-явма пухăннă. Анчах ку хутĕнче рабочисене хирĕç полици, салтаксемпе казаксем тухнă. Персе вĕлерме тата хĕнеме тытăннă. Çак тискер ĕçе курса, рабочисем калама çук хытă тарăхнă. Çапах та, правительство хушнипе, Трепов палач татах та хаяр ĕçсем тума тытăннă. Советăн председателĕпе секретарьне тата чылай депутатсене арестленĕ. Губернатор Петербурга телеграф тăрăх çапла пĕлтернĕ: «Иванововăра талăк хушши халăх ушкăнĕ пăлханать. Рабочисем çĕçĕсемпе, чулсемпе пересçĕ, пăшалпа пересçĕ, çуртсен кантăкĕсене çĕмĕрессĕ. Телеграфпа телефон пралукĕсене татнă, Гандурин фабрикине вут тĕртсе янă. Ивановăна килнĕ вице-губернатор халăх питĕ пăлханни çинчен каласа парать. Округ штабĕнчен тепĕр батальон пехота, 300 казак, кавалери хушса пама ыйтатăп. Губернатор Леонтьев».

Большевиксен партин хулари комитечĕ сĕннĕ тăрăх, Совет июнĕн 23-мĕшĕнче демонстраци иртерме—хула вăтаçĕрне ушкăнпа кайма йышăннă. Анчах та, казаксем хупăрласа илнĕ пирки, рабочисен ирĕксĕрех Талка шывĕ патне чакма тивнĕ. Кĕрешӳ чарăнса тăнă. Хуçасем рабочисем ыйтнипе килĕшмен, рабочисем те парăнман. Рабочисен пĕрлĕхне хавшатас шутпа уйрăм хуçасем забастовка тăвакансен хăшпĕр ыйтăвĕсене çырлахтарасси пирки пĕрерĕн-пĕрерĕн пĕлтерӳсем кăларса çакма тытăннă. Кĕрешӳ ултă эрне ытла пынă пирки тата халăх ывăнса çитнĕ пирки, Совет пăлханакан рабочисене стачка тума чарăнмашкăн чĕнме йышăннă. Çав кун Талка шывĕ патне 40.000 яхăн рабочи пухăннă. Вĕсем пĕр кăмăллă пулса йышăннă постановленире çапла каланă: пулса тăнă лару-тăру пире ирĕксĕрех ĕçе тухма хушать, анчах эпир, хамăр вăйсене çирĕплетсе, хамăрăн правăсемпе требованисемшĕн çĕнĕрен кĕрешме тытăнăпăр, тенĕ.

Паттăр забастовка вĕçленнĕ. Российăри пĕрремĕш Совет та ĕçлеме чарăннă.

«ВКП(б) историйĕн Кĕске курсĕ» çак историллĕ стачкăна акă мĕнле хак парать: «Стачка рабочисене пиçĕхтернĕ. Вăл рабочи класс паттăрлăхĕн, çирĕплĕхĕн, чăтăмлăхĕн, пĕрлĕхĕн тĕслĕхне кăтартса панă. Вăл Иваново-Вознесенскри рабочисемшĕн чăн-чăн политикăллă воспитани шкулĕ пулса тăнă».

Иваново-Вознесенскри Совет Российăри революциллĕ кĕрешӳ хăйĕн чи çӳллĕ пусăмне çĕкленсе çитеймен вăхăтра пуçланса кайнă, çавăнпа вăл восстанин боевой органĕ пулса тăрайман тата пулса тăма та пултарайман. Анчах та вăл Иваново-Вознесенскри пролетариата организацилес ĕçре тата унăн восстанийĕнче калама çук пысăк вырăн йышăнса тăнă. Вăл çывăхри поселоксенчи (Шуяри, Муромри тата ытти çĕрти) мĕнпур рабочисемшĕн авторитетлă пулнă. Çав вырăнсенчи халăх Советран пулăшу ыйтма пынă.

Шуяри хресченсем Совет хăйсен политикăллă руководителĕ пулнине туйса илнĕ. Совет пуçланса кайни хăй те тата унăн ĕçĕ рабочи класпа хресченсене пĕтĕçтерме пулăшнă. Шуяри хресченсем хушса янă çынсем Советран пулăшу ыйтнă, «çĕре мĕнле туртса илмеллине тата земски начальниксене мĕнле пĕтермеллине» ăнлантарса пама ыйтнă. Муромри хресченсем Иваново-Вознесенскри Совет патне çырнă çак çыру интереслă: «Эпир, Муром патĕнчи виçĕ ял хресченĕсем, Ивановăра забастовка пыни çинчен илтрĕмĕр. Эпир рабочисем хăйсен пурнăçне лайăхлатма тăрăшни çинчен илтрĕмĕр, рабочисем çавăн пек тăрăшнишĕн эпир савăнатпăр».

Иваново-Вознесенскри ĕçсем çине Мускав пролетариачĕпе унăн руководителĕ—большевиксен Мускаври комитечĕ—тимлĕн çавăрăнса пăхнă тата пулăшнă. Май—июнь—июль уйăхĕсенче Мускаври комитет ултă хут прокламацисем кăларнă, вĕсенче Иваново-Вознесенскри революциллĕ ĕçсем çинчен çырнă.

Иваново-Вознесенскри Совет—Российăри пĕрремĕш Совет—Октябрьти Социализмлă Аслă Революци хыççăн пуçланса кайнă Совет влаçĕн тĕслĕхĕ пулса тăнă.

Рабочисем ун чухне,—тесе палăртрĕ Сталин юлташ стахановецсен Пĕтĕм Союзри пĕрремĕш канашлăвĕнче каланă хăйĕн сăмахĕнче,—«...паллах, рабочи депутачĕсен Совечĕсем социализмлă стройăн никĕсĕ пулса тăрĕç тесе шухăшламан. Вĕсем, рабочи депутачĕсен Совечĕсене туса, царизмран, буржуазирен хӳтĕленнĕ кăна. Анчах çакă вăл 1905 çулта... рабочи депутачĕсен Совечĕсемшĕн пуçарса янă юхăм юлашки шутран капитализма çĕмĕрсе тăкасси патне, тĕнчен улттăмĕш пайĕнче социализм çĕнтересси патне илсе пынă иккĕленме çук фактпа нимĕн чухлĕ те хирĕçмест». («Ленинизм ыйтăвĕсем», 11-мĕш издани, 477—478 стр.).

Октябрьти Социализмлă Революци, Ленинпа Сталин ертсе пынипе, никам çĕнтереймн Советлă Социализмлă Çĕршыв туса хучĕ. Çакă вара пирĕн халăха никам çĕнтереймн вăй пачĕ, çав вăй Совет влаçĕн тăшманĕсен ирсĕр ĕçĕсене пурне те аркатса пычĕ, çав вăй нимĕç фашисчĕсен мĕнпур захватчикла ĕçĕсене çĕмĕрсе тăкрĕ. Гитлерла Германи тусан пек арканса кайрĕ.

Проф. Б. ВОЛИН.

Элĕксем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессишĕн та ăшни палăрсах каймасть

(Районри „Колхоз хаçатне" пăхса тухнă май)

Иртнĕ çулсенче Элĕк районĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе республикăра малти вырăна йышăнма пултарчĕ. Анчах та ун хыççăн элĕксем, тунă çитĕнӳсемпе лăпланса, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç çине çителĕксĕр пăхма тытăнчĕç, кайри вырăна тăрса юлчĕç.

Районри «Колхоз хаçачĕ» те выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç çинчен час-часах манса каять.

Февралĕн 15-мĕшĕнче тухнă хаçатра районри парторганизацин отчетпа суйлав пухăвĕ çинчен информациллĕ статья пичетлесе кăларнă. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе унта çапла çырнă:

«Докладчик... парторганизацин çитменлĕхĕсем çинчен каланă чухне уйрăмах районра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç япăх пынине палăртрĕ. Паянхи куна район нихăш выльăхсем енĕпе те плана тултарман, фермăсене комплектласа çитернĕ колхозсем сахал. Çакă вăл пуринчен ытла иртнĕ çулта çамрăк выльăхсене пăхма пĕлменнипе пула чылай вилнинчен килнĕ».

Докладчик та, тухса калаканнисем те выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе урăх нимĕн те каламан пулсан (ун çинчен хаçатра çырман), вара элĕксем чăннипех те выльăх-чĕрлĕх ыйтăвне хакламассĕ тесе калама та юрать.

Кăçал ку тарана çитиччен районри хаçат 20 номер тухнă. Унта колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç мĕнле пыни çинчен пĕтĕмпе 8 статья пичетлесе кăларнă, анчах та çав 8 статьяран 3-шĕ çеç критикăллă статьясем, ытти пилĕк статьи—выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç лайăх пыни çинчен çырнă статьясем.

Хаçат хăй маларах мĕн çырнине манса кайнă тĕслĕхсем те пур. Акă, сăмахран: январь уйăхĕнче «Колхоз хаçачĕ» Охверкăри «Хăват» колхозри конюхсене лашасене япăх пăхнăшăн питлет. Шăпах тепĕр уйăхран хаçат, СССР Совнаркомĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе заданисене ирттерсе пурнăçланăшăн колхозниксене хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановление çав колхозра сӳтсе-явни çинчен пĕлтерсе, çапла çырать:

«Эпĕ 4-мĕш çул конюхра. Çамрăк тихасене пăхса ӳстеретĕп. Виçĕ çул хушши манăн пĕр тиха та вилни пулман. Иртнĕ çулта 10 тиха пăхса ӳстерсе, колхоза кӳлме юрăхлă лашасем туса патăм. Халĕ каллех 8 тиха пăхса ӳстертĕм. Мана кăçал колхоз тихасене лайăх пăхнăшăн 40 ĕçкунĕ хушса парса премилерĕ. Малашне те эпĕ выльăхсене тĕрĕс-тĕкĕл пăхса ӳстерессишĕн тăрăшса, пĕтĕм вăя хурса ĕçлетĕп,—терĕ конюх Н. Аникин юлташ».

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе мĕнле çитменлĕхсем пуррине, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, унăн тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе мĕнле ĕçсем тума кирлине районри хаçатра çителĕксĕр çутатса пынă, ку ыйтусем тĕлĕшпе начар ĕçлекенсене тивĕçлипе, большевикла критиклекен статьясем хаçатра вуçех те çук.

Элĕк районĕн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемелле, районри хаçат ăна тимлĕн пулăшса пымалла.

ФЕРМА ÇУМĔНЧИ УЧАСТОКА АКСА ПĔТЕРЧĔÇ

Çĕрпӳ районĕнчи «Пионер» колхоз ферма çумĕнчи участока 5 гектар вика акрĕ тата 3 гектар çĕрулми лартрĕ. Çак участокра пĕтĕмпех ферма работникĕсем хăйсем ĕçлерĕç.

А. ИВАНОВ.

Мускава США Президенчĕн Трумэнăн представителĕ Г. Г. Гопкинс господин килнĕ

Майăн 25-мĕшĕнче Мускава США Президенчĕн Трумэнăн представителĕ Г. Гопкинс господин хăйĕн арăмĕпе пĕрле килнĕ.

Центральнăй аэродромра Г. Гопкинс господина çаксем хирĕç тухса кĕтсе илнĕ: СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский, СССР Наркоминделĕн Протокол Отделĕн Заведующийĕ Ф. Ф. Молочков, СССР Наркоминделĕн США Отделĕн Заведующийĕн Помощникĕ В. И. Базыкин, çавăн пекех тата США-н Ĕçри Поверенăйĕ Д. Кеннан господин тата вăл ертсе пыракан Америка Посольстви членĕсем, Франци Посолĕ Ж. Катру господин, Великобританин Ĕçри Поверенăйĕ Ф. Робертс господин тата ыттисем те.

Г. Гопкинс господинпа пĕрле Мускава США-н Совет Союзĕнчи Посолĕ В. А. Гарриман господин тата США-н Государство Секретарĕн Помощникĕ Ч. Болен господин килнĕ.

Президент полномочийĕ пирки Трумэн конгреса çыру янă

НЬЮ-ЙОРК, майăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Шурă Çурт çапла пĕлтернĕ: Трумэн президент конгреса çыру янă. Çав çырура вăл Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительствин исполнительнăй органĕсене тăтăшах улăштарса пырас ĕçре ăна яланлăха аллă полномочисем пама ыйтнă. Трумэн каланă тăрăх, вăрçă пуçланнă чухне конгресс президента исполнительнăй органсене вăрçă ыйтнă пек улăштарма полномочи панă. Анчах çав полномочипе усă курса тунă улшăнусем вăрçă пĕтнĕ хыççăн 6 уйăхран хăйсене хăйсемех пĕтсе ларассĕ.

ЧЕРЧИЛЛЬ ПРАВИТЕЛЬСТВИН ÇĔНĔ СОСТАВĔ

ЛОНДОН, майăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, майăн 25-мĕшĕнче каçхине премьер-министр Уинстон Черчилль хăйĕн правительствин составĕ çинчен пĕлтернĕ.

Черчилль — премьер-министр пулса юлать, Иден—ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулать, Джон Андерсон—финанс министрĕ, лорд Бивербрук—пичет сыхлакан лорд, Леопольд Эмери—Инди тĕлĕшпе ĕçлекен министр пулать. Брендан Бракена, информаци министрĕ пулса ĕçлепĕскере—Александер лейборист вырăнне адмиралтействăн пĕрремĕш лорчĕ (тинĕс министрĕ) туса хунă. Гарольд Макмиллана, çывăхри хĕвелтухăçĕнче министр-резидент пулса ĕçлекенскере—сэр Арчибальд Синклер либерал вырăнне авиаци министрĕ пулса ĕçлеме лартнă. Çар министрĕ вырăнĕнче Джеймс Григг юлать. Реконструкци министрĕ пулса ĕçленĕ лорд Вултон Совет председателĕ пулса тăракан лорд вырăнне ларать (çав вырăнта ĕçлекен çын тата премьер-министрăн заместителĕ пулса ĕçлет), халиччен унта Клемент Эттли лейборист ĕçленĕ. Оливер Литтлтона, çар производстви министрĕ пулса ĕçленĕскере—суту-илӳ министрĕ вырăнне лартнă, çав вăхăтрах вăл хăйĕн малтанхи вырăнĕнче те юлать. Лейбористсен лидерĕ Эрнест Бевин вырăнне—ĕçпе наци повинноçĕн министрĕ пулса ĕçлеме сутĕç министрĕ пулса ĕçленĕ Ричард Батлера лартнă. Генеральнăй прокурор пулса ĕçленĕ Дональд Сомервелла—шалти ĕçсемпе шалти хăрушсăрлăх министрĕ туса хунă, унта унччен лейбористсен лидерĕ Герберт Моррисон ĕçленĕ. Виконт Кренборн доминионсем тĕлĕшпе ĕçлекен министр вырăнĕнчех юлать. Шотланди тĕлĕшпе ĕçлекен министр вырăнĕнче Томас Джонстон лейборист вырăнне граф Розбери ĕçлет. Çĕрĕçпе пулă тытас ĕç министерствине унăн ĕлĕкхи министрĕ Роберт Хадсон ертсе пырать.

ГЕСТАПĂН ИСПАНИРИ ШПИОНЛА-ДИВЕРССИЛЛЕ ОРГАНИЗАЦИЙĔ

ПАРИЖ, майăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). «Либерасьон» хаçат Испанирен илнĕ хыпарсем тăрăх çапла пĕлтерет: Германи парăниччен темиçе уйăх маларах гестапо Франкон вăрттăн службине хăйĕн аллине илнĕ. Гестаповецсен тĕллевĕ çакă пулнă: хăйсен çыннисемпе тата Франко кадрĕсемпе усă курса, Испанире вăйлă организаци тумалла пулнă, çав организацин тĕнчене хавшатас тата вăрçăра çĕнтернисен пĕрлĕхне аркатас тĕлĕшпе ĕçлемелле пулнă, фашистсене çĕнĕрен çиеле кăларма хатĕрленмелле пулнă. Çакăпа пĕр вăхăтрах гестапо Францие тата ытти çĕршывсене парашютистсем чылай антарнă. Парашютистсен юлашки ушкăнне Франци çĕрĕ çине Германи парăнас умĕн çеç антарнă. Германи парăнсан, çав ушкăнăн политика деятелĕсене вĕлерес тата саботаж тăвас ĕçе организацилемелле пулнă. Гитлеровецсен нумай агенчĕсене Франципе Испани чикки урлă каçарса янă.

Илнĕ хыпарсем тăрăх, гестапо, Франкопа тата франкистсен фалангин штабĕпе килĕшсе, Германи парăниччен нумай малтанах Испании вăрттăн ĕçлекен службине урăхлатса йĕркелеме пуçланă.

Гестапо центрĕ хăйĕн Францие яракан агенчĕсене çакăн пек задани парать: Францире çĕнĕрен ĕçлеме пуçлакан фашистла организацисемпе çыхăнмалла, çав организацисем активлă ĕçлеме пуçласан —вĕсене пулăшмалла. Çакна палăртнă: гитлерла агентсен укçа нумай, мĕншĕн тесен Германи парăниччен нумай малтанах гитлерла влаçсем Испание калама çук нумай укçа куçарнă. Хаçат каланă тăрăх, çакна та палăртнă: Францирен каялла чакас умĕн Германи командованийĕ Францире диверсантсен ушкăнĕсем тунă; нимĕçсем каялла чаксан, çав ушкăнсене Францирех хăварнă. Вĕсемсĕр пуçне, пысăк промышленность предприятийĕсемпе чугун çул узелĕсен районĕсенче сирпĕнтерекен япаласемпе хĕçпăшалсен питĕ лайăх пытарса хунă склачĕсем пин ытла туса хунă.

Хаçат малалла çапла пĕлтерет: Франци контрразведки Францире унта янă гитлерла агентсене нумайĕшне ярса тытнă ĕнтĕ. Анчах та Испанире гестапо организацийĕ çаплах ĕçлет-ха, вăл Францире çеç мар, ытти çĕршывсенче те сăтăрла ĕçсем тума хатĕр тăрать.

ГЕРИНГ ÇАРАТСА ПУХНĂ ИСКУССТВО ПУЯНЛĂХĔН ВЫСТАВКИ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатăн корреспонденчĕ Берхтесгаден хулинчен çапла пĕлтерет: Америкăн çар влаçĕсем Берхтесгаден хули çывăхĕнчи отеле халăх пырса курма уçнă. Çав отельре Геринг çаратса пухнă искусство пуянлăхĕ сыхланса тăрать. Вăтам шутпа шутласан та, унти пуянлăх 200 миллион доллар ытла тăрать. Геринг вăрланă картинăсем хушшинче Амстердамри коллекципе тăнă Ван-Дейк çырнă 8 картина пур, çавăн пекех тата Рембрандт, Гойя тата ытти художниксем çырнă произведенисем те нумай.

«Нью-Йорк геральд трибюн» хаçатăн корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Геринг çаратса пухнă искусство пуянлăхĕ 500 миллион доллар ытла тăрать, Геринг коллекцийĕнче 1.200 картинăна яхăн пулнă.

ЛĂПКĂ ОКЕАН ÇИНЧИ ВĂРÇĂ

ЛОНДОН, майăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнă пĕлтернĕ тăрăх, Филиппин утравĕсен шутне кĕрекен Минданау утравĕ çинче американецсен 3 пехотнăй дивизийĕ çав утравăн вăтаçĕрти пайĕнче пĕрлешнĕ те Япони оборонине темиçе пая уйăрса янă.

Майăн 25-мĕшĕнче союзниксен 14-мĕш армийĕн чаçĕсем Бирмăри Рангун хулинчен 88 миля хĕвеланăçнерехре ларакан питĕ паха юханшыв портне Бассейна пырса кĕнĕ. Вăтаçĕрти секторта японецсем Ирравади шывĕнчен хĕвеланăçнерехри позицисене тытса тăраççĕ.

ВАШИНГТОН, майăн 25-мĕшĕ. (ТАСС). США-н Лăпкă океан çинчи флочĕн штабĕ çапла пĕлтерет: Окинава утравĕн кăнтăр пайĕнче тинĕс пехотин сылтăм флангра кĕрешекен чаçĕсем Асато шывĕ урлă икĕ кĕпер хывнă, ун хыççăн вара пехота чаçĕсем американецсен Наха хулине маларах кĕнĕ чаçĕсене пулăшма çав хулана кĕрсе кайнă.

КЕСКЕН

▲ Çурçĕр Италири Масса хулинче гитлеровецсемпе Итали фашисчĕсем вĕлернĕ 300 çыннăн ӳчĕсене тупнă. Çав çынсене пурне те 1944 çулхи сентябрĕн 10-мĕшĕнче персе пăрахнă. Гитлеровецсен ирсĕр ĕçĕсене йĕрлесе тĕпчекен комисси çакна пĕлнĕ: çав 300 çын хушшинче пĕчĕк ачасемпе çамрăксем нумай.

▲ Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тинĕс министерстви çапла пĕлтерет: Лăпкă океан çинче вăрçма пуçланăранпа Япони 11.601 самолет пĕтнĕ, Америкăн—2.070 самолет.

▲ Çак кунсенче Тегеран хулинче ВОКС-ăн Культура çуртĕнче литература каçĕ пулса иртнĕ, унта Иранри интеллигенцин 300 представительне яхăн пулнă. Иран поэчĕ Кахремон «Берлин парăнни» ятлă поэмăна вуласа панă. Ку поэмăна вăл Хĕрлĕ Çар фашистла Германи столицине илнĕ ятпа çырнă. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Сельэлектрăн Чăваш конторине васкавлăн çакăн пек работниксем кирлĕ: план отделĕн начальникĕ, экономист, главнăй бухгалтерăн заместителĕ, инженер-гидротехниксем тата техниксем.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: г. Чебоксары, ул. К. Маркса, 7, Сельэлектро.

3—2.

ВЦСПС-ăн Ильинкăри кану çуртне çакăн пек работниксем кирлĕ: Червоне ПР—18 йышши нефть двигателĕ патĕнче ĕçлекен электромеханик, çăкăр пĕçерекен, 1-мĕш категорири повар, врач, баянист, опытлă бухгалтер-картотетчик, официанткăсем, техничкăсем, сторож тата подсобнăй хуçалăхри рабочисем.

Германирен килнĕ çырусем

БЕРЛИНРА КАÇХИНЕ

Берлинри советăн çар комендатури, хуçалăхри аплă ĕçсене туса пынисĕр тата хула хуçалăхне юсаса йĕркене кĕртес тĕлĕшри ĕçсене ертсе пынисĕр пуçне, хулари культурăллă пурнăçа организацилес ыйтусем тĕлĕшпе те ĕçлет. Хулана илнĕ хыççăн виçĕ эрне хушшинчех ку тĕлĕшпе питĕ нумай ĕç тунă, ĕçĕн мĕнпур пуçарулăхĕ, ăна организацилесси, ертсе пырасси кунта совет комендатурин ĕçĕ пулса тăраççĕ.

Берлинра совет комендатури туса иртнерĕ искусство работникĕсен пĕрремĕш канашлăвĕ хыççăнах режиссерсен, артистсен, композиторсен, музыкантсен, художниксен иккĕмĕш пухăвĕ пулса иртнĕ. Ку пухура искусство работникĕсем пĕрремĕш канашлу хыççăн хăйсем мĕн тунни çинчен каласа панă.

Театрсен сыхланса юлнă çурчĕсенче театрпа эстрадăн 10 труппи концертсем параççĕ, тепĕр 15 труппа программăсем хатĕрлеççĕ. Шарлоттенбург районĕнче 56 кинотеатр ĕçлет. Çывăх вăхăтрах нимĕçсен фильмĕсене пăхса тухса суйласа илĕç те вĕсене кинотеатрсенче кăтартма пуçлĕç.

Камернăй оркестрăн малтанхи концерчĕсенче халăх питĕ нумай пулчĕ. Темиçе кун каярах çеç Германири паллă театр Шиллерăн «Разбойники» пьесине лартса хăйĕн сезонне уçнă.

Çитес кунсенчех оперетта театрĕ уçăлмалла.

Кайзердаммтрассе районĕнчи радио çуртăн концерт залĕнчен трансляциленĕ юлашки радиоконцертра концерт пуçланиччен чылай малтан 1.500 вырăна концерт итлеме пынă халăх йышăннă. Берлинри опера театрĕн оркестрĕ Чайковскин, Бородинăн, Штраусăн произведенийĕсене выляса панă. Оркестрăн дирижерĕ Леопольд Людвиг пулнă.

Ун çывăхĕнчи «Оберон» театрти эстрада концерчĕсенче Берлинри театрсен, циркпа эстрада артисчĕсем тухаççĕ. Ку театрăн директорĕ тата руководителĕ пулса кино-комик Паташон артист ĕçлет. Çав театрăн малтанхи куракансем Колесников полковникăн чаçĕнчи гвардеецсем пулнă. Вăл гвардеецсем хушшинче Совет Союз Геройĕсем Жданов лейтенант, Изотиков майор, саперсем, разведчиксем—Берлинра çапăçнăскерсем, Александерплац урамĕсенче хаяр кĕрешӳре пулнăскерсем, Франкфуртераллейăри метро туннелĕсенче çĕр айĕнче вăрçнăскерсем, Полици управленийĕн çуртне штурмласа туртса илнĕскерсем пулнă.

ÇУРÇĔР ГЕРМАНИРИ ХУЛАСЕНЧЕ

Померанипе Мекленбургри хуласенче кулленхи пурнăç йĕркене кĕрсе пырать. Штеттинра, Свинемюндере, Ростокра, Штральзундра тата ытти хуласенче те вырăнти самоуправленин органĕсем ĕçлеме пуçларĕç, бургомистрсем хăйсен ĕçĕсене туса пыма тытăнчĕç. Нимĕç администрацийĕн органĕсем хăйсен мĕнпур ĕçĕсене советсен çар комендатури асăрхаса пынипе, пулăшса пынипе тăваççĕ.

Свинемюндере водопроводпа электростанцие юсаса ĕçе янă. Халĕ ĕнтĕ хулан чылай пысăк пайĕнче электричество çути пур, канализаци системине юсаççĕ. Хулара больница тата уйрăм çынсен темиçе врач кабинечĕ уçăлнă, апат-çимĕç магазинĕсем, икĕ пекарня, колбаса фабрики, атă-пушмак юсакан мастерскойсем ĕçлеççĕ. Совет минерĕсемпе саперĕсем гитлеровецсем чакнă чухне хулан тĕрлĕ пайĕсене хурса хăварнă минăсене сиенсĕрлетеççĕ.

Штральзундра та пурăнмалли çуртсемпе предприятисене электроэнерги пама тытăннă. Кунта пулăран консерва тăвакан фабрика, тĕтĕмлемелли производство, икĕ арман, пекарньăсем уçнă. Хулара халĕ çитмĕл пин нимĕçе яхăн пурăнать.

Юлашки темиçе кун хушшинче Германин çурçĕрти çак икĕ портне 12 карап пынă. Çав карапсемпе вăрçă вăхăтĕнче Германирен темиçе пин нимĕç тухса тарнă пулнă. Карапсенчен хăшпĕрисем Данирен килнĕ, теприсем икĕ-виçĕ эрне тинĕсре ишсе çӳренĕ хыççăн каялла таврăннă.

Форстенберг хулинче те (Мекленбург провинцийĕ) мирлĕ пурнăç йĕркене кĕрсе пырать. Кунта хулари больница ĕçлеме тытăннă, водопровода тата электростанцин пĕр пайне ĕçе янă.

Нойбранденбургра çĕнĕ бургомистр, çар комендатури пулăшнипе, вăхăтра çăкăр, какай тата çĕрулми сутассине организацилепĕ, водопровода, электростанцие тата газ заводне юсаса ĕçе янă.

Перлеберг, Путлитц тата ытти хуласенче те халăх валли 3 уйăхлăха апат-çимĕç запасĕ хатĕрлесе хунă. Хĕрлĕ Çар питĕ хăвăрт наступлени туса пынă пирки, Померанипе Мекленбургри нумай хуласенче вăрçă сиенĕ пачах та палăрмасть. Грайфсвальдра урамсенче халăх туллиех. Магазинсенче суту-илӳ тăваççĕ, фабрика трубисенчен тĕтĕм мăкăрланать. Тинĕс хĕрринчи курортлă хуласен сăн-сăпачĕсем те çакăн пекех.

Пур çĕрте те киркăсем (лютеран тĕнне тытса пурăнакансен чиркӳ ячĕ) уçнă. Пасторсем турра кĕлтăваççĕ.

Майăн 7-мĕшĕнче Померани провинцийĕн администраци центрĕнче—Штеттин хулинче—нимĕçсен кашни кун тухакан «Дейче цейтунг» ятлă хаçачĕн пĕрремĕш номерĕ тухрĕ. Хаçатра, официальнăй документсемсĕр пуçне, Çурçĕр Германири хуласенчи пурнăç çинчен те статьясем пичетлесе кăларнă. Штеттин хулинче нумайранпа пурăнакан Карл Кран «Малалла мĕнле» ятлă статьинче, вăрçăра Германие парăнтарнă пирки нимĕç халăхĕ умĕнче тăракан задачăсем çинчен хăйĕн шухăшĕсене каласа панăскерĕнче, çапла çырать: «Пирĕн халăх пурăнма пултарать, унăн пурăнмалла та. Пире парăнтарнă державăсем пирĕн валли, Гитлер хăйĕн ухмахлăхне кура ытти халăхсене пĕтерсе тăкма хатĕрленĕ пек, пĕтермелли кун-çул хатĕрлесе хуман. Хăйĕн юлашки сăмахĕнче Сталин Совет Союзĕ Германие пĕтерсе тăкас тĕллеве тытмасть, тесе татах тепĕр хут ĕнентерсе каларĕ. Германи вăрçăра парăннă вăхăтра эпир çĕнĕрен ирĕклĕ шухăшлама май илтĕмĕр. Пирĕн хамăра хамăрăн пулăшмалла, хамăр лартнă тĕллеве ырми-канми ĕçпе пурнăçа кĕртмелле».

И. ДЕНИСОВ.
(ТАСС спецкорĕ.)

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, издательство конторин — 0—23.

НТ 00349 Типография № 1 Управлени полиграф[illegible] СНК ЧАССР [illegible] Тираж 10.000